И.Н.Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗ - Чӑваш Республикин вӗренӳ, ӑслӑлӑх, культура тӗп центрӗ. Вӑл уҫӑлнӑранпа - 47 ҫул, ҫак тапхӑрта кунта 100000 специалиста вӗрентсе кӑларнӑ, ҫав йышран 70000-не яхӑн - куҫӑн майпа.

Раҫҫей Федерацийӗн Вӗренӳпе ӑслӑлӑх министерстви ҫулсерен ҫӗр-шыври аслӑ шкулсен мониторингне ирттерет. Асӑннӑ заведение виҫӗ ҫул ӗнтӗ эффективлисен списокне кӗртни унӑн сумӗ чакманнине пӗлтерет. Чӑн та, ҫак тапхӑрта университет ертӳҫи улшӑнчӗ. Телее, ҫакнашкал улшӑну унӑн рейтингне хавшатмарӗ. Кӑҫал ректор должноҫне йышӑннӑ Андрей Юрьевич Александрова "Хыпар" тӗпелне йыхравларӑмӑр, пире кӑсӑклантаракан ыйтусене хуравлама ыйтрӑмӑр.

**- 2013 ҫулта ЧПУ "Кадрсем - регионсем валли" конкурс ҫӗнтерӳҫи пулса тӑчӗ. Андрей Юрьевич, ҫакӑ яваплӑха тата ытларах туйма хистет-и?**

- Патшалӑх пулӑшӑвне ҫӗнсе илессишӗн пыракан асӑннӑ конкурсӑн пӗтӗмлетӗвӗ тӑрӑх 14 вуза 2 ҫул патшалӑх тӗллевлӗ субсиди уйӑрӗ. Унта эпир "Чӑваш Республикинчи машиностроенипе строительство, электротехника предприятийӗсем валли пысӑк квалификациллӗ кадрсем тӗллевлӗ хатӗрлес ӗҫе лайӑхлатасси" проектпа хутшӑнтӑмӑр. Чӑваш Енри экономика секторӗпе пирӗн заведени хушшинче чӑнахах та ҫыхӑнусем ҫирӗп пулнине тӗслӗхсемпе ҫирӗплетсе патӑмӑр. Патшалӑх пулӑшӑвне тивӗҫни - лӑпланмалли сӑлтав мар. Куҫакан укҫа-тенкӗпе аслӑ пӗлӳ памалли программӑсене ҫӗнетмелле, хушма професси пӗлӗвӗ памашкӑн та усӑ курмалла.

Пирӗн тӗллев уҫӑмлӑ: ҫирӗпленнӗ йӑласене университетӑн сыхласа хӑвармалла, ҫав вӑхӑтрах пӗлӳ парас ӗҫ рынокӗнче малти позицие йышӑнассишӗн тӑрӑшмалла, вӗренӳ тата интеллект вӑйлӑ центрӗ пулса тӑмалла.

**- Эппин, ҫирӗп никӗс кирлӗ. Университетшӑн вӑл - унӑн вӗрентекенӗсем, ӑслӑлӑх ӗҫченӗсем.**

- Чӑваш Республикинчи наука чи пысӑк центрӗ шутланать Чӑваш патшалӑх университечӗ. Кунта 1100 профессорпа преподаватель, ҫав шутра ӑслӑлӑх 140 докторӗ, 569

кандидачĕ. Паянхи кун ăслăлăх-педагогика 23 шкулĕ ĕçлет кунта, вĕсем хатĕрлекен наука ĕçĕсемпе Чăваш Енре çеç мар, чикĕ леш енче те паллашаççĕ. Диссертаци канашĕсем, аспирантура, интернатура, ординатура хăйсен тивĕçĕсене пурнăçласа пыраççĕ.

Вĕренĕве татăлми майпа йĕркелес тĕлĕшпе университет республикăра пĕлтерĕшлĕ вырăнта. Ку енĕпе Чăваш Ен территорийĕнче аслă шкулăн филиалĕсем /Патăрьелте, Канашра, Улатăрта/ вырнаçни витĕмлĕ. Вĕренӳ интеграцийĕ тĕлĕшĕнчен Чăваш Енре, çавăн пекех Тутарстан, Пушкăртстан çĕрĕсем çинче представительствăсем уçни паха. Унта вăтам шкулпа сыв пуллашма хатĕрленекенсем университет "сывлăшне" хăнăхаççĕ - вĕренӳ программин малтанхи тапхăрĕнче кирлĕ пĕлĕве илме пултараççĕ.

**- Хамăрăн республика яш-кĕрĕмĕпе хĕрупраçĕсĕр пуçне сирĕн пата Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен, ют çĕр-шывсенчен те çамрăксем вĕренме килеççĕ. Çакă вузăн пĕтĕмĕшле тăрăмне еплерех витĕм кӳрет?**

- Аслă шкулсен хушшинче вĕсен усăлăх мониторингне ирттернĕ чухне ют çĕр-шыв студенчĕсем пурри-çуккине те шута илеççĕ. Ку енĕпе пирĕн университетăн опычĕ пысăк. 1991 çултанпах вĕрентӳ ĕçĕн экспорт рынокне тухнă. Паянхи кун тĕлне ЧПУран пурĕ чикĕ леш енчен килнĕ 400 студент професси аслă пĕлĕвне илни çинчен диплома тивĕçнĕ. Аякри 30 патшалăхран, çывăхри 7 çĕр-шывран Чăваш Ене килнĕ вĕсем. Пĕтĕмпе "юттисене" 17 специальноçпа аслă пĕлӳ панă тăван альма-матерта. Юлашки çулсенче университетăн тĕнчери статусĕ пушшех ӳсрĕ. Çакна чикĕ леш енчен килекен студентсен йышĕ пысăклансах пыни çирĕплетет. Акă 2006-2007 вĕренӳ çулĕнче вĕсем 100 çын шутланнă, 2013-2014-мĕшĕнче "юттисен" йышĕ 400 патнех кармашрĕ. 15 факультетра 20 тĕрлĕ специальноçа алла илессишĕн çине тăраççĕ вĕсем. Çĕр-шывсен географийĕ те сарăлсах пырать. Акă тин вĕçленнĕ вĕренӳ тапхăрĕнче кунта Бразили, Черногори студенчĕсем те ăс пухрĕç. Пуринчен те ытларах Туркменистан, Израиль, Ангола, Марокко, Сири, Таджикистан, Конго çĕр-шывĕсенчен килеççĕ пирĕн пата. Ытларахăшĕ техника специальноçĕсене, медицинăпа сывлăх сыхлавне кăмăллать. Вĕренĕве эффективлă йĕркелес тĕллевпе ют çĕр-шыв студенчĕсемпе ĕçлемелли факультет пур. Кунта хатĕрленӳ уйрăмĕ никĕсленнĕ, вырăсла тĕплĕн вĕренме ятарлă кафедра уçнă.

Аслă шкултан вĕренсе тухнă хыççăн чылайăшĕ тăван çĕр-шывне таврăнать, унта квалификаци наци экзаменне ăнăçлă тытать те ĕçе пуçăнать. Çавна май И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ тĕнче шайĕпе тĕпчесен те паха кадрсем хатĕрлет тесе çирĕплетме пулать.

**- Ĕç рынокĕнче лару-тăру вăхăтпа килĕшӳллĕн улшăнать. Çĕр-шыва кирлĕлĕхне кура пĕлӳ паракан специальноçсен списокне улшăнусем кĕртетĕр-и?**

- Паллах. Суту-илӳ палати, ЧР вĕренӳ аслă заведенийĕсен ректорĕсен канашĕ, ЧР професси пуçламăш тата вăтам пĕлӳ паракан учрежденисен директорĕсен канашĕ тата И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ хăйсен хушшинче тăвата енлĕ килĕшӳ алă пуснă. Вăл ĕç рынокĕнче хальхи вăхăтра тата çитес çулсенче кирлĕ пулакан специалистсене палăртма май парать. Улшăнусем экономика отраслĕсен реструктуризацине, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркеленнине, кадрсен йышне упрани-аталантарнине, ĕçлекенсен пахалăхне ӳстернине, ĕç вырăнĕсемпе ĕçлекенсен шайлашăвне кура пулса пыраççĕ.

Палăртса хăвармалла: экономика эффективлă аталанăвĕнче чи кирли - предприятисенче тивĕçлĕ квалификациллĕ ĕçченсем çителĕклĕ пулни. Конкуренцие çирĕппĕн чăтакан продукци хатĕрлесе кăларасси çӳллĕ шайри технологисене тарăннăн пĕлмесен йывăр. Çакна асра тытатпăр специалистсем хатĕрлес ĕçре. Студентсем теори пĕлĕвне практикăра çирĕплетни пĕлтерĕшлĕ. 2013-2014 вĕренӳ çулĕнче пирĕн вĕренекенсем пурĕ 300 ытла предприятипе организацире производство практики е стажировка иртнĕ.

Чăваш патшалăх университечĕ ĕç рынокĕпе тачă çыхăнура. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче кăна республикăри предприяти-организацирен специалистсем, бакалаврсемпе магистрсем кирли çинчен 200 хутчен ыйтса çырнă. Çакна шута илсе университета вĕренме йышăнмалли тĕрĕслев цифрисене çирĕплететпĕр. Урăхла калас тăк - аслă пĕлӳллĕ специалистсене экономика ыйтнине кура хатĕрлетпĕр.

**- Паянхи кун абитуриентсенчен ытларахăшĕ çапах та мĕнле специальноçсене вĕренме кăмăл тăвать?**

- Чи аслă сарăлнисем - юриспруденци, сиплев ĕçĕ, стоматологи, педиатри, психологи, туризм тата строительство. Техника специальноç
ĕсем те ç
амр
ă
ксене юлашки в

ӑ
х
ӑ
тра ытларах ил
ĕ
ртни сав
ӑ
нтарать
.

**- Хальхи вӑхӑтра вĕренӳ аслӑ заведенине кĕнĕ чухне Патшалӑх пĕрлехи экзаменĕсенчи кӑтартусене тĕпчеççĕ. Сирĕн шухӑшпа, абитуриент пĕлĕвне тĕрĕс хаклама çителĕклĕ-ши вĕсем?**

- ППЭ - Раççейри выпускниксен пĕлӳ пахалӑхне хакламалли тĕп мел. Хӑш-пĕр условисене шута илес тĕк тест витĕр кӑларасси - меллĕ те, усӑллӑ та. Анчах пулас студент хӑй суйлакан специальноçа вĕренме еплерех хатĕрленнине тĕрĕслеме-тĕпчеме ППЭ кӑна çителĕксĕр. Кашни выпускникӑн çитĕнĕвĕсене комплекслӑ - пур енлĕн - хаклани кирлĕ. Вӑл мĕн енĕпе ытларах пултарнине тĕпчесе пĕлмелле.

**- Паллах, ӑста специалист, бакалавр, магистр хатĕрлесси вĕрентекенсен квалификацийĕпе тӳрремĕнех çыхӑннӑ.**

- Университетра профессор-преподаватель йышĕн пĕлĕвне ӳстерессине йĕркелес ĕçе тимлĕ сӑнатпӑр. 2006 çулта квалификацие пысӑклатмалли курссене пĕтернисен тата профессие çĕнĕрен вĕреннисен йышĕ штатри преподавательсен 14 процентне танлашнӑ, 2013 çулта вара - 24,8 процентпа. Хӑш-пĕри Раççейри е тĕнчери вĕренӳ пĕр-пĕр заведенийĕнче опытне пуянлатать. Таврӑннӑ хыççӑн вĕренӳ-меслетлĕх ĕçне çĕнĕлĕх кĕртет. Аслӑ шкулта çамрӑк преподавательсем валли педагогика ӑсталӑхĕн курсĕсем тӳлевсĕр иртеççĕ. Акӑлчан чĕлхине хӑнӑхмалли, дистанци вĕрентĕвĕн меслечĕсене ӑша хывмалли программӑсем те хӑйсен аудиторине тупсах пыраççĕ.

**- Раççейри, тĕнчери тĕрлĕ учрежденире пирĕн преподавательсем стажировкӑра пулни çинчен каларӑр. Çакӑ вĕренӳ заведенийĕсемпе йышӑннӑ ятарлӑ килĕшӳсем тӑрӑх пулса пырать-и? Студентсемпе те ылмашӑнатӑр-и?**

- Ăслăлăха аталантарас ĕç "хамăрăн хуранта кăна вĕренипе" нумай мала каяймасть. Пĕр-пĕрин опычĕпе паллашни вара ырă "çимĕç" патне çул хывать. Университетра "Ют патшалăх гражданĕсем ЧПУра наука-техника стажировки иртесси çинчен калакан положени" тата "Вĕрентекенсемпе ăслăлăх ĕçченĕсен академи мобильлĕхĕ çинчен калакан положени" вăйра тăраççĕ. Юлашки 5 çулта кăна вузсен хушшинчи килĕшӳсен картинче студентсем, аспирантсем, преподавательсем пурĕ 300-ĕн академи ылмашăвĕн программисене хутшăннă. Беларуçри, Гомельти, Павлодарти, Ереванри патшалăх университечĕсемпе, сăмахран, ку енĕпе ăнăçлă ĕçлесе пыратпăр. Таджикистан, Китай, Швеци заведенийĕсенче ăслăлăх стажировкисем иртес опыт пуянлансах пырать.

**- Харăсах темиçе заведение вĕренме кĕнĕ çамрăксене хăвăр ертсе пыракан вуза суйлама мĕн каласа ӳкĕте кĕртнĕ пулăттăр?**

- Чăваш патшалăх университечĕ мал ĕмĕтлĕ, пултаруллă, хастар яшсемпе хĕрсене яланах илĕртнĕ. Хăвăр суйланă специальноçпа пирĕн патăмăрта хальхи вăхăтра юрăхлă паха пĕлӳ илесси пирки ан иккĕленĕр. Пирĕн партнерсен йышĕнче - патшалăх влаçĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, электротехникăпа машиностроени кластерĕн малта пыракан предприятийĕсем, анлă технологиллĕ клиникăсем, кредит-финанс учрежденийĕсем, IT-технологисене вăя кĕртекен организацисем.

Пирĕн тытăмра - 9 общежити, тĕрлĕ енпе ĕçлекен хальхи йышши спорт комплексĕ, 4 спортзал, Культура керменĕ /900 вырăнлăх/, студентсен санатори-профилакторийĕ. Вузра вĕренме, пултарулăха аталантарма, интереслĕ пурăнма услови çителĕклĕ. Хăйĕн пуласлăхĕ валли анлă çул уçма кăмăл тăвакансене хапăлласах кĕтетпĕр.

**Ирина ИВАНОВА. Газета "Хыпар". 2014. 12 июля.**